# Сăр сарăлĕ – улăха шыв илĕ

**РФ Президенчĕ Дмитрий Медведев Правительствăна Шупашкар ГЭСне туса пĕтермелли проекта патшалăх экспертизи витĕр кăларнă тата регионсенче сÿтсе явнă хыççăн килес çулхи çурла уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне Атăл-Кама бассейнĕнче шывпа тивĕçтерессине йĕркелемешкĕн сĕнÿсем хатĕрлеме хушнă.**

Гидроузел строительствине вĕçлессипе, Шупашкар шыв управĕпе халăх хуçалăхĕнче усă курассипе çыхăннă ыйтусемпе çине тăрса вăй хума ыйтнă. Проект хатĕрлÿçи – «Атăлçи энергетикин инженери центрĕ» АО. Чăваш Енпе Мари Эл, Чулхула облаçĕ документа хушăмсем кĕртме тăратнă. Общество ГЭС шывне 68 метра /халĕ 63 метр шайĕнче/ çити хăпартсан Атăл çыранĕ, унăн юпписем, инженерин хÿтĕлев хатĕрĕсем, вăрман, шурлăх, улăх-çаран мĕнлерех улшăнасси пирки ЧР Çут çанталăк ресурсĕсен министерствин экологи институтĕнчен тĕпчев ирттерме ыйтнă. Ăна пурнăçлама ăсчахсене явăçтарчĕç. Сăмахран, мана Сăр тăрăхĕнчи вĕçен кайăксене мĕн кĕтни, вĕсен тĕсĕсемпе йышĕ çинчен отчет пама хушрĕç.

Çу уйăхĕн 1-10-мĕшĕсенче Сăр тăрăх кимĕпе Çĕмĕрлерен Етĕрнене, утă уйăхĕнче Çĕмĕрлерен Утаркассине /чарăна-чарăна/ çитрĕмĕр. Юхан шыв тăрăхĕнчи чĕрĕлĕхе тишкертĕмĕр. Унтах çĕр каçрăмăр. Çурла уйăхĕнче Етĕрне районĕнчи улăх-çаранра, шыв-шур таврашĕнче, Атăл леш енче ĕçлерĕмĕр.

63 метр шайĕнче Атăл таппи Сăр тăрăх хăпарнă, Атăл çинчи утравсене пурне те шыв илнĕ – маларах вĕçен кайăк ĕрченĕ вырăнсем пĕтнĕ. Çунатлисен пĕр пайĕ – Сăр тăрăхне, ытти республика тулашне куçнă.

68 метр таран çĕклесен Атăл таппи Çĕмĕрле патне çывхарĕ, Сăр тăрăхĕнче 13390 гектар çĕр шыв айне пулĕ, 40 пине яхăн гектар шурлăхланĕ. Сăр çинчи кайăксен 180 тĕсĕн /Чăваш Енри мĕн пур тĕсĕн иккĕ виççĕмĕш пайĕ/ ытларахăшĕ ĕрчекен вырăна улăштарĕ. Çав шутра – федераципе республикăн Хĕрлĕ кĕнекисене кĕртнĕ пăра сăмса /кулик-сорока/. Сăр çинче çуллен 380 мăшăр /Раççейĕн Европа пайĕнчи йышăн 10-15 проценчĕ/ чĕп кăларать. Хисеп икĕ хута яхăн пĕчĕкленĕ. Вĕсем çыранри, утравсем çинчи хăйăр çинче йăва çавăраççĕ. Шыв хупласан çăмарта тума вырăн юлмĕ.



*• Пăнчăллă ăмăрт кайăк.*

Пĕчĕк шыв чĕкеçĕ /малая крачка/ кăнтăртан Чăваш Ене çитсен икĕ лаптăка йышăнать: пĕрремĕшĕ Сăр утравĕ çинче – Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Утаркасси ялĕ патĕнче, иккĕмĕшĕ – Хĕрлĕяр ялĕ тĕлĕнче. Вĕсен «колонийĕ» Хватукасси тăрăхĕнче те пурччĕ. Утрав шурлăхланчĕ те – урăх вырăна кайрĕç. Çулла 400-500 мăшăр шутларăм. Утравсем шыв айне пулсан пĕрре те юлмĕ.

Сăрпа пĕрлешекен юхан шывсен вăрринче, Сăр улăх-çаранĕнче вун-вун тĕрлĕ кайăк ĕрчет. Вăл шутра – юхан шыв шăхранĕ /малый зуек/, улăх кайăкĕ /чекан луговой/, тăри /полевой жаворонок/, шурлăх хăмăш кайăкĕ /камышовка болотная/, ахаль чечен кайăк /славка серая/... Пурин те урăх вырăн шырама тивĕ.

Эпĕ Сăр тăрăхĕнче пăнчăллă ăмăрт кайăкăн /большой подорлик/ 3 мăшăрне çеç асăрханă. Вĕсем чĕп кăларнă вырăнсене те шыв илĕ. Çавăнпа вĕсен шăпи вунă çултан мĕнле пуласси паллă мар. Мари Элпе Чулхула облаçĕ хушшинче – 60, Чулхула облаçĕнчи Кăрмăшпа Пăсăрман поселокĕсем патĕнче 200-шер мăшăр сăрă чарлан шута илнĕ. Апатланма Сăр çине вĕçеççĕ. Вĕсене те улшăну кĕтет. ГЭС шывне хăпартсан Сăр çинчи хăш-пĕр кайăк – тĕпеклĕ чăмкăç /чомга/, чарлăк /чайка/, шурлăх чĕкеçĕ, кайăк кăвакал – йышланĕ.

Сăр тăрăх çуркунне Атăла çитиччен кайăк хурсен йышлă кĕтĕвĕ хăпарать. Çул çинче апатланма улăх-çарана анать. Вăл шыв айне пулсан хурсен çулĕ те улшăнĕ. Вĕсене шурлăх кирлĕ мар, курăк çиеççĕ.

Шурă çамкаллă хурсем /белолобые гуси/ Етĕрне çывăхĕнче кашни çуркуннех курăк сăхма анаççĕ. Кунти лапама та шыв илĕ. Хурсем çĕнĕ улăх шырĕç.

Вĕçен кайăксен пысăк пайĕ республика тулашне куçнăран Чăваш Ен пысăк сухату тÿсĕ. Çавăнпа орнитологсен ушкăнĕ тăкака саплаштарма федераци бюджетĕнчен укçа уйăрма, унпа республикăн вĕçен кайăксене ĕрчетмелли программисене пурнăçланă çĕрте усă курма ыйтать.

■ **Геннадий ИСАКОВ,**
**биологи наукисен кандидачĕ**